28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
МАЙ
12
ШАМАТКУН
90(6841) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Мирлĕ строительство тапхăрĕ пуçланчĕ

Совет халăхĕ пĕтĕм чун-чĕререн кĕтсе тăнă кун çитрĕ. Майăн 9-мĕшĕнче шурăмпуç килнĕ чухне радио Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем паттăр Хĕрлĕ Çара тата пирĕн союзникĕсен çарĕсене пĕр сăмахсăрах парăнни çинчен пĕлтерчĕ.

Аслă çĕнтерÿ сехечĕ çапрĕ! Вăрçă сĕрĕмĕпе йăсăрланан тĕнчене çутатса, çĕнтерÿ хĕвелĕ тухрĕ!

Çак куна тĕнчери ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем кĕтнĕ, уйрăмах ăна пирĕн совет халăхĕ хытă кĕтсе тăнă. Совет халăхĕ, çав куна çĕнсе илес тесе, этемлĕх халиччен курман хаяр вăрçăра тĕнчери пур халăхсенчен те ытларах вăй хурса, ытларах юн тăкса кĕрешрĕ.

Нимĕç империалисчĕсем, 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче Совет Союзĕ çине тапăнса, пĕтĕм тĕнчери демократипе ирĕклĕхĕн тĕрекне, ирĕклĕхе юратакан халăхсен пĕртен-пĕр шанчăкне пĕтерсе тăкма, совет çыннисене вĕлерсе пĕтерме е чура туса хума, пирĕн юнпа тар юхтарса тунă пурлăхсемпе пуянлăхсене туртса илме хапсăннă; çакăн хыççăн вара вĕсем — тискер кайăксем—пĕтĕм тĕнчере пуç пулса тăма ĕмĕтленнĕ. Анчах нимĕç захватчикĕсем пирĕн çĕршыв çине килсе тапăннă кун вĕсем пуçĕпех пĕтсе ларассин пуçламăшĕ пулса тăчĕ.

«Пирĕн ĕç—тĕрĕс ĕç, эпир çĕнтеретпĕрех», терĕ вăрçăн малтанхи кунĕсенчех халăхсен çулпуçĕ аслă Сталин. Эпир çак шанчăка, нимĕç фашисчĕсен йытă кĕтĕвне пурпĕрех çапса аркатас шанчăка, чи йывăр самантсенче те çухатман. Нимĕç ирсĕрĕсем Атăл çине тухма тискеррĕн тапăнса пынă кунсенче те, вĕсем Кавказ тăвĕсем çине хăпарма чаваланнă вăхăтра та пирĕн паттăр совет воинĕ: Тăшмана хирсе пăрахатпăр! Пĕтеретпĕр! Берлинта пулатпăр!—тенĕ.

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар çак аслă вăрçăра чи йывăррине тÿссе ирттерчĕ. Тÿссе ирттерчĕ кăна мар. Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсен тĕп вăйĕсем килсе çапнине сирсе пăрахрĕ, фашистсен çар машинине аркатса тăкрĕ. Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар Европăри нумай халăхсене фашистла чуралăхран хăтарчĕ, вĕсене хăйсем тĕллĕн пурăнма ирĕклĕх пачĕ.

Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене Отечественнăй аслă вăрçăра пĕтĕм халăх иксĕлми вăй парса тăчĕ. Заводсемпе фабрикăсенчи рабочисем Хĕрлĕ Çар валли кунне-çĕрне пĕлмесĕр, ывăнма пелмесĕр çĕнтерÿ хĕçпăшалĕ туптарĕç. Рабочисем паттăр воинсене тĕнчере чи лайăх танксемпе самолетсем, тупăсемпе минометсем, автоматсемпе винтовкăсем, боеприпассем, тумтирсем çителĕклĕ парса тăчĕç. Пирĕн колхоз хресченĕсем Тăван çĕршыва фронт валли апат-çимĕç, промышленность валли чĕртавар ытлăн-çитлĕн парса тăчĕç. Пирĕн совет интеллигенцийĕ çапăçу техникипе производство техникине лайăхлатса, наукăпа культурăна малалла аталантарса пычĕ, çапла вара вăл Отечественнăй аслă вăрçăра тăван Хĕрлĕ Çара, рабочисемпе колхозниксене тава тивĕçлĕ пулăшу парса тăчĕ.

Пирĕн аслă çĕнтерÿре Хĕрлĕ Çарăн паттăр ĕçĕсемпе пĕрлех, рабочисемпе колхозниксен тата совет интеллигенцийĕн пархатарлă ĕçĕ те усăмлăн палăрса тăрать.

Пирĕн аслă çĕнтерÿре совет стройĕпе совет государствин иксĕлми хăвачĕ, большевиксен партийĕн организаторла вăйĕ, пирĕн çулпуçăн аслă Сталин юлташăн генийĕ палăрса тăрать.

Çавăн пекех пирĕн аслă çĕнтерĕве тăвас тесе, пĕтĕм Совет çĕршывĕнчи тăванла ытти халăхсем пекех, пирĕн чăваш халăхĕ те пĕтĕм вăйне хурса ĕçлерĕ. Орденлă Чăваш республики Тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне çулран çул чыслăн пурнăçа кĕртсе пычĕ. Чăваш халăхĕн ывăлĕсем Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче, ытти мĕнпур тăванла халăхсен ывăлĕсем пекех, тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçрĕç. Аслă Атăл çинче çитĕннĕ чăваш ывăл-хĕрĕсем çак вăрçăра хăйсен улăпла паттăрлăхне кăтартрĕç. Эпир вĕсен ячĕсене çĕнтерÿ уявĕнче чыслатпăр. Чăваш республикинчи рабочисемпе колхозниксем тата интеллигенци фронта ĕçченĕн пулăшса тăчĕç. Паян эпир çакăнпа тивĕçлипех мухтанма пултаратпăр.

Паттăр Хĕрлĕ Çар юн юхтарса кĕрешсе, тылри ĕçсыннисем пĕтĕм вăя хурса ĕçлесе, эпир çак аслă çĕнтерĕве турăмăр.

Германин хĕçпăшаллă вăйĕсем, вĕсене пуçĕпех çапса аркатнă хыççăн, пĕр сăмахсăрах парăнчĕç. Совет халăхĕ, ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсем чаплă çĕнтерÿ турĕç.

Совет халăхĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç туса пынă Отечественнăй аслă вăрçă çĕнтерÿллĕн пĕтнине тата Хĕрлĕ Çар историллĕ çĕнтерÿсем тунине яланлăха палăртса хăварас тесе, СССР Верховный Совет Президиумĕ, хăйĕн кăçалхи майăн 8-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, майăн 9-мĕшне пĕтĕм халăхăн уяв кунĕ —Çĕнтерÿ Праçникĕ—тума йышăнчĕ.

Совет Союзĕнчи халăхсем çак куна чаплăн уявласа ирттерчĕç. Пирĕн Чăваш республикинче те мĕнпур предприятисемпе колхозсенче, район центрĕсенче, учрежденисенче хаваслă чаплă митингсем пулса иртрĕç. Ĕççыннисем Çĕнтерÿ Кунĕ çитнишĕн хăйсем вĕçĕ-хĕррисĕр савăннине палăртрĕç.

Сĕнтĕр районĕн центрĕнче пулса иртнĕ митингра «Çĕнĕ Юнга» колхоз председателĕ Ванюшкина юлташ çапла каланă:

— Эпир çĕнтерÿ кунĕ çывăххине шанса ĕçлерĕмĕр. Халĕ те уйхирте хĕрÿллĕ ĕç пырать. Пирĕн колхоз тĕштырăсене акса пĕтерчĕ. Эпир çуракине çывăх кунсенчех пĕтĕмĕшпех вĕçлессишĕн кĕрешетпĕр. Пирĕн колхозниксем Государствăн Тăваттăмĕш Военнăй Заемне 48.000 тенкĕлĕх çырăнса илчĕç, укçине те çийĕнчех парса татрĕç. Тăван çĕршывăн хăватне малалла та тĕреклетессишĕн эпир пурне те пама хатĕр тăратпăр. Сывă пултăр пире çĕнтерÿ патне илсе çитернĕ аслă Сталин юлташ!

Çапла калать халĕ кашни совет патриочĕ. Эпир Тăван çĕршывăн хăватне малалла тĕреклетсе пырассишĕн хамăрăн пĕтĕм вăя пама хатĕр тăратпăр.

Германие çĕнтернĕ аслă кун çитнĕ ятпа И. В. Сталин юлташ халăха чĕнсе каларĕ. «Юлташсем!—терĕ Сталин юлташ.—Отечественнăй Аслă вăрçă эпир татăкланах çĕнтернипе вĕçленчĕ. Европăри вăрçă тапхăрĕ пĕтрĕ. Мирлĕ строительство тапхăрĕ пуçланчĕ». Çапла Сталин юлташ совет халăхĕ умне мирлĕ пурнăç тапхăрĕнчен тухса тăракан çĕнĕ задачăсем лартать. Пĕтĕм Совет çĕршывĕнче мирлĕ ĕç пуçланать. Хамăрăн аслă Тăван çĕршыва татах та хăватлăрах та пуянрах çĕршыв тăвассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлер! Социализм строительствинче çулран-çул çитĕнсе пынă ĕç хастарлăхĕн традицине малалла та çирĕп тытса пырар!

Аслă çĕнтерÿшĕн, совет халăхне ĕмĕрлĕхе мирлĕ те телейлĕ пурнăç туса панăшăн эпир хамăр çĕнтерÿсен организаторне Аслă Сталина мухтавлатпăр, пĕтĕм чун-чĕререн тав тăватпăр, ăна пĕтĕм халăх ырлăхĕшĕн нумай-нумай çулсем пурăнма сывлăх сунатпăр!

Колхозниксен савăнăçĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ, майăн 10-мĕшĕ. (Телефонпа). Хĕвел тухнă вăхăтра Ĕмпĕрт ял Советне телефон çĕнтерÿ хыпарне пĕлтерчĕ. Тепĕр темиçе минутран ял Совечĕ умне халăх пухăнма та пуçларĕ. Кĕтÿ ăна тухнă хĕрарăмсем, хире ĕçе каякансем чарăнаççĕ кунта. Туя çине таянса çÿрекен карчăксем те урама тухнă. Ака 60 çулхи сĕм куççăр карчăк Иванова Фекла савăннипе макăрса:

— Эпĕ те виличчен ку куна кĕтсе илтĕм вĕт,—тет.—Халĕ татах та пурăнас килет. Фронтра манăн виçĕ ывăл. Ултă орден илнĕ вĕсем. Виличчен тепрер çав ывăлсене кăкăр çумне тыта-тыта ыталасчĕ...

Ял Совечĕ умĕнчи халăх хисепĕ ÿснĕçемĕн ÿссе пырать. Ака çывăхри 4 ялтан вăрçă пĕтнĕ хыпара тĕплĕн пĕлсе килма çынсем килеççĕ. Вĕсене ял Совет председателĕ Племянников юлташ ăнлантарса парать те лешсем ырă хыпара таткăн пĕлтерме хăйсен ялĕсене чупаççĕ. Вăрçă чарăннă ятпа митингсем ирттерме районран часах уполномоченнăйсем çитрĕç. «Венера» колхозри митинг урамра иртрĕ. Колхоз председателĕ, Отечественнăй вăрçă инваличĕ А. Прокопьев, митинга уçса, çапла каларĕ:

— Юнлă вăрçă чарăнчĕ. Каллех мирлĕ пурнăç пуçланчĕ. Пирĕн малашнехи пурнăç илемлĕ те тулăх пулмалла. Пурнăçа лайăхлатасси хамăртан килет. Ĕçлес пулать вăй çитнĕ таран.

«Венера» колхоз тĕштырăсемпе куракăсене акса пĕтерне. Халĕ пахча-çимĕç лартма хатĕрленет.

Митингра чылай колхозниксем тухса каларĕç. Вĕсем пурте çĕнтерÿ организаторне Сталин юлташа, тăван Хĕрлĕ Çара тав турĕç.

... Ялта кунĕпех аслă уявăн хаваслă шавĕ кĕрлесе тăчĕ. Пÿртсем тăрĕнче Хĕрлĕ ялавсем вĕлкĕшеççĕ.

(Хамăр корр.).

П Ĕ Л Т Е Р Ÿ

ПК ВКП(б) секретарьне, ВКП(б) Мускав Хула Комитечĕн секретарьне, Хĕрлĕ Çарăн Политикăллă Главнăй Управленийĕн Начальникне, СССР Верховный Совечĕн депутатне А. С. Щербаков юлташа пытарма комисси туна. Комиссие çаксем кĕреççĕ: Н. М. Шверник (председатель), М. Ф. Шкирятов, Г. М. Попов, В. Н. Черноусов, А. Ф. Горкин, Г. Ф. Александров тата Ф. И. Голиков.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАЙĂН 9-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

ТУКУМС хулипе ЛИБАВА хули хушшинче нимĕç çарĕсен инфантери генералĕ ГИЛЬПЕРТ командир пулса ертсе пыракан Курляндири ушкăнĕ, нимĕçсен 16-мĕшпе 18-мĕш армийĕсенчен тăраканскер, кăçалхи майăн 8-мĕшĕнче 23 сехетрен пуçласа хирĕç тăма пăрахнă та хăйĕн çыннисене тата вăрçă техникине ЛЕНИНГРАД фрончĕн çарĕсене пама тытăннă. Фронт çарĕсем ЛИБАВА (ЛЕПАЯ), ПАВИЛОСТА, АЙЗПУТЕ, СКРУНДА, САЛДУС, САБИЛЕ, КАНДАВА, ТУКУМС хулисене йышăннă. Майăн 9-мĕшĕнче каç пулнă тĕле фронт çарĕсене 40.000 нимĕç салтакĕпе офицерĕ ытла тыткăна парăннă. Тыткăна парăнакансене йышăнасси малалла пырать.

ВИСЛА вăрри районĕнче, ДАНЦИГРАН хĕвелтухăçнерехре, тата ПУТЦИГЕР-НЕРУНГ сăмсахĕнче, ГДЫНЯ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, тинĕс хĕррине хĕстерсе лартнă нимĕç çарĕсен ушкăнĕсем хирĕç тăма пăрахнă та майăн 9-мĕшĕнче иртен пуçласа хăйсен çыннисене тата вăрçă техникине БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронтпа 2-мĕш фронт çарĕсене пама тытăннă. Майăн 9-мĕшĕнче каç пулнă тĕле БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсене 11.000 нимĕç салтакĕпе офицерĕ, БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсене 10.000 нимĕç салтакĕпе офицерĕ тыткăна парăннă. Тыткăна парăнакансене йышăнасси малалла пырать.

Чехословакире нимĕç çарĕсен ушкăнĕ, совет çарĕсене парăнасшăн мар пулса, хĕвеланăçнелле тата кăнтăр-хĕвеланăçнелле хыпаланса чакать.

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем танковăй соединенисемпе пехота çĕрле питĕ хăвăрт пырса çапнă хыççăн тăшман хирĕç тăнине пĕтерсе лартнă та майăн 9-мĕшĕнче ирхине 4 сехетре пирĕнпе союзлă Чехословаки столицине—ПРАГА хулине — нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă. Çавăн пекех тата Чехословаки çĕрĕнче ХОМУТОВ, КАДАНЬ, БИЛИНА, ЛОУНИ хулисене йышăннă. ДРЕЗДЕН хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре фронт çарĕсем малалла куçса пынă, КИРНА, ЗЕБНИТЦ, НОЙГЕРСДОРФ, ЦИТТАУ, ФРИДЛАНТ, ЛАУБАН, ГРАЙФФЕНБЕРГ, ГИРШБЕРГ, ВАРМБРУНН хулисене йышăннă. БРЕСЛАВЛЬ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра фронт çарĕсем ЛАНДЕСХУТ, ГОТТЕСБЕРГ, ВАЛЬДЕНБУРГ, ШВЕЙДНИЦ, РЕЙХЕНБАХ, ЛАНГЕБИЛ, ФРАНКЕНШТАЙН, ПАТШКАУ, ВАРТА, ГЛАТЦ ЛАНДЕК хулисене йышăннă.

УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем Чехословаки çĕрĕнче ШИЛПЕРК, МЮГЛИЦ, МОРАВСКА ТРЮБАУ, ЛИТОВЕЛЬ, ПРОСТЕЕВ хулисене йышăннă.

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, çав тери хăвăрт малалла куçса пырса, Чехословаки çĕрĕнче ВЕЛИКИЕ МЕЖИРИЧИ, ЙИГЛАВА, БРОД, БЕНЕШОВ ТРЖЕБИЧ хулисене йышăннă.

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем Австри çĕрĕнче ЛОТСДОРФ, ВИЗЕЛЬБУРГ, АМШТЕТТЕР, МЮРЦЦУСШЛАГ, БРУК, ГРАЦ хулисене йышăннă та АМШТЕТТЕН хули районĕнче Америка çарĕсемпе пĕрлешнĕ.

МАЙĂН 10-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 10-мĕшĕнче ЛЕНИНГРАД фрончĕн çарĕсем çаплах нимĕç çарĕсен Курляндири ушкăнĕн парăннă соединенийĕсемпе частĕсене йышăнса пынă. Майăн 10-мĕшĕнче ирхине 8 сехет тĕлне 68.578 нимĕç салтакĕпе унтер-офицерĕ, 1.982 офицер тата 13 генерал тыткăна парăннă. Генералсен шутĕнче нимĕç çарĕсен Курляндири ушкăнĕн командующийĕ инфантери генералĕ ГИЛЬПЕРТ, 16-мĕш армин командующийĕ ФОЛЬКАМЕР генерал-лейтенант, 18-мĕш армин командующийĕ БЕГЕ генерал-лейтенант, 2-мĕш армейски корпусăн командирĕ ГАУСЕ генерал-лейтенант, 122-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ ШВАРЦ генерал-майор, 126-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ ХЕЛИНГ генерал-майор, 329-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ МЕНКЕСТ генерал-лейтенант. Çакăн пек трофейсене шута илнĕ: танксемпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупăсем—143, самолетсем—68, хир тупписем—532, минометсем—146, пулеметсем—1.421, винтовкăсемпе автоматсем — 8.870, бронетранспортерсем — 50, автомашинăсем—1.112, тракторсемпе тягачсем—106, радиостанцисем—104, çар хатĕрĕсем тиенĕ лавсем—470, лашасем — 3.313. Тыткăна парăнакансене йышăнасси тата трофейсене шута илесси малалла пырать.

Фронт çарĕсем ВИНДАВА (ВЕНТСПИЛС), ТАЛСИ, КУЛДИГА хулисене йышăннă.

* * *

БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем Висла вăрри районĕнче парăннă нимĕç çарĕсен соединенийĕсемпе чаçĕсене йышăнса пынă. Майăн 10-мĕшĕнче каç пулнă тĕле фронт çарĕсене 20.000 нимĕç салтакĕпе офицерĕ ытла тыткăна парăннă. Тыткăна илнисем хушшинче нимĕçсен 18-мĕш горно-стрелковăй корпусĕн командирĕ инфантери генералĕ ХОХБАУМ, 7-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ РАППАРТ генерал-лейтенант, 28-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ МЕРГЕЙМ генерал-майор. Çакăн пек трофейсене шута илнĕ: самолетсем—50, танксем—20, хир тупписем — 40, бронетранспортерсем—30, автомашинăсем — 500.

* * *

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем ВИСЛА вăрри районĕнче, ДАНЦИГРАН хĕвелтухăçнерехре, тата ПУТЦИГЕР-НЕРУНГ сăмсахĕнче, ГДЫНЯ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, парăннă нимĕç çарĕсене йышăнса пынă. Майăн 10-мĕшĕнче ирхине 11 сехет тĕлне 30.500 нимĕç салтакĕпе офицерĕ тыткăна парăннă. Тыткăна парăннисем хушшинче нимĕçсен 2-мĕш армийĕн командующийĕ танковăй çарсен генералĕ фон ЗАУКАН, 23-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ ШИРМЕР генерал-лейтенант, 31-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ ЛЕК генерал-лейтенант, 35-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ РИХАРД генерал-лейтенант, 203-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ ГЕБОЖЕ генерал-майор, 558-мĕш гренадерски дивизин командирĕ БЕРКЕН генерал-лейтенант.

Фронт çарĕсем ПУТЦИГЕР-НЕРУНГ сăмсахне унти ХЕЛЬ хулипе тата порчĕпе пĕрле пĕтĕмĕшпех йышăннă.

* * *

Нимĕçсен ШЕРНЕР генерал-фельдмаршал командир пулса ертсе пыракан çарĕсем, парăнасси çинчен çырнă акта пăхăнмасăр, унччен тăнă вырăнтах юлса алăри хĕçпăшала пăрахма килĕшмен. Çавăнпа вара УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем ШЕРНЕР генерал-фельдмаршалăн çарĕсене атакăлама пуçланă та, малалла куçса пырса, Чехословаки çĕрĕнче ПОДБОРХАНЫ, НОВЕ-СТРАШЕВЦЫ, БЕРОУН, ГОРЖОВИЦЕ, ДОБРЖИШ, КРАВАКИ, РОУДНИЦЕ, ЛИТОМЕРЖИЦЕ, ЧЕСКА ЛИПА, ЛИБЕРЕЦ, ЯБЛОНЕЦ, ТАНВАЛЬД, ТРУТНОВ, ГОСТИННЕ, ЧЕСКЕ СКАЛИЦЕ хулисене йышăннă. Пирĕн çарсем хупăрласа илме пуçланине кура, ШЕРНЕР генерал-фельдмаршал çарĕсен пĕр ушкăнĕ пĕр йĕркесĕр тыткăна парăнма пуçланă. Майăн 9-мĕшĕпе 10-мĕшĕнче УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем 35.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

Нимĕçсен ШЕРНЕР генерал-фельдмаршал командир пулса ертсе пыракан çарĕсен тепĕр ушкăнĕ те парăнасси çинчен çырнă актăн условийĕсене пăхăнман. Кунта УКРАИНĂРИ 4-мĕш фронт çарĕсем, нимĕç çарĕсен çав ушкăнне хăваласа пырса, Чехословаки çĕрĕнче РИХНОВ, КОСТЭЛЕЦ, ЖАМБЕРК, КИШПЕРК, УСТИ, ЛИТОМИШЛЬ, ЦВИТТАУ, ПОЛИЧКА, БОСКОВИЦЕ, ТЫНИШТЕ, ГРАДЕЦ КРАЛЕВСКИ, ПАРДУБИЦЕ, ХРУДИМ, ЧАСЛАВ хулисене йышăннă.

Майăн 9-мĕшĕпе 10-мĕшĕнче фронт çарĕсем нимĕçсен пĕр йĕркесĕр парăннă 20.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

* * *

УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем умĕнче тăнă нимĕçсен ВЕЛЕР генерал-полковник командир пулса ертсе пыракан çарĕсем те парăнасси çинчен çырнă акта пăхăнман, вĕсем унччен тăнă вырăнтах юлса алăри хĕçпăшала пăрахма килĕшмен. Çавăнпа вара УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем ВЕЛЕР генерал-полковникăн çарĕсене атакăлама пуçланă та, малалла куçса пырса, Чехословаки çĕрĕнче ГУМПОЛЕЦ, ТРЖЕШТ, ТЕЛЬЧ, ДАЧИЦЕ, СЛАВОНИЦЕ, ЙИНДРЖИХОЙ-ГРАДЕЦ, ВЕСЕЛИ МЕЗИМОСТИ, ТРЖЕБОНЬ, ЧЕСКЕ-БУДЕЕВИЦЕ хулисене йышăннă.

Майăн 9-мĕшĕпе 10-мĕшĕнче фронт çарĕсем 8.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

* * *

УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем Австри çĕрĕнче ВАЙДХОФЕН, ЛЕОБЕН, САНКТМИХАЭЛЬ хулисене йышăннă та ГРАЦ хулинчен хĕвеланăçнерехре Англи çарĕсемпе пĕрлешнĕ.

Майăн 9-мĕшпе 10-мĕшĕнче фронт çарĕсем ВЕЛЕР генерал-полковникăн çарĕнчи пĕр йĕркесĕр парăннă 23.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ, вăл шутра 4 генерал.

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитетĕнчен тата Халăх Комиссарĕсен Советĕнчен

Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн Центральный Комитечĕ тата СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ партие, Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе офицерĕсене тата Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕççыннисене çакăн çинчен çав тери хурланса пĕлтереççĕ: 1945 çулхи майăн 10-мĕшĕнче 18 сехет те 15 минутра, нумай вăхăт хушши йывăр чирлесе выртнă хыççăн, чĕри ĕçлеме чараннипе, ВКП(б) Центральный Комитечĕпе Мускав Комитечĕн секретарĕ, Хĕрлĕ Çарăн Политикăллă Главнăй Управленийĕн Начальникĕ Александр Сергеевич ЩЕРБАКОВ юлташ вилчĕ.

ЩЕРБАКОВ юлташ хăйĕн боевой вырăнĕнче вилчĕ. Вăл хăйĕн вĕресе тăракан пĕтĕм вăйне социализмлă строительство ĕçне тата фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕнтерес ĕçе пачĕ. ЩЕРБАКОВ юлташ вилнипе, парти, çар тата халăх большевикла питĕ чаплă руководителе, государствăн çав тери пысăк деятельне çухатрĕç.

ЩЕРБАКОВ юлташ Ленин—Сталин партийĕн шанчăклă ывăлĕ, большевиксен чи талантлă деятелĕсенчен пĕри, хамăр Тăван çĕршывăн хĕрÿллĕ патриочĕ пулнă.


Хĕрлĕ Çарпа çĕршывра партипе политика ĕçĕн çав тери пысăк организаторĕ пулса, ЩЕРБАКОВ юлташ çамрăкран пуçласа юлашки кунсене çитичченех социализм çĕнтерессишĕн тата ăна çирĕплетессишĕн, пирĕн партин ленинла-сталинла политикишĕн хĕрÿллĕн кĕрешсе пурăнчĕ.

Аслă Сталинăн вĕренекенĕпе юлташĕ пулса, ЩЕРБАКОВ юлташ хамăр Тăван çĕршывăн ырлăхĕшĕн пĕр чарăнмасăр пултарулăн ĕçлесе тăчĕ, çакăншăн ăна пирĕн парти тата хамăр Тăван çĕршыври мĕнпур ĕççыннисем хисеплеççĕ, юратаççĕ.

Александр Сергеевич ЩЕРБАКОВ юлташăн, Ленин—Сталин партийĕн тата Хĕрлĕ Çарăн чи паллă руководителĕсенчен пĕри пулнăскерĕн, пурнăçĕ Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне малалла чечеклентерсе вăйлатса пырассишĕн кĕрешнĕ çĕрте пирĕн çĕршыври ĕççыннисемшĕн пример пулса тăрĕ.

ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (БОЛЬШЕВИКСЕН) ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ.

СССР ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕЧĔ.



А. С. ЩЕРБАКОВ

Нумай вăхăт хушши йывăр чирлесе выртнă хыççăн, майăн 10-мĕшĕнче большевиксен партийĕн чи паллă деятелĕсенчен пĕри Александр Сергеевич Щербаков юлташ вилчĕ. Вилĕм пирĕн хушăран чи çывăх туса, çапăçури юлташа, ĕççыннисен ĕçĕшĕн хĕрÿллĕн кĕрешсе пурăннă çынна илсе кайрĕ.

Щербаков юлташ хăйĕн пурнăçне мĕн çамрăкранах большевиксен партийĕн кунçулĕпе çыхăнтарчĕ, хăйĕн пĕтĕм вăйĕпе халăхшăн ĕçлесе пурăнчĕ.

Щербаков юлташ нумай çулсем хушши комсомолпа парти организацийĕсенче ĕçлерĕ. Юлашки çичĕ çул хушшинче вăл ВКП(б) Мускав хула тата Область Комитечĕсен секретарĕ пулса ĕçлерĕ, пирĕн партин чи пысăк организацине ертсе пычĕ.

Щербаков юлташ большевиксен партийĕн шанчăклă ывăлĕ, унăн политикине активлăн пурнăça кĕртсе пыракан, пирĕн çĕршыври социализм строительствин чи пысăк организаторĕсенчен пĕри пулса ĕçлерĕ.

Отечественнăй Аслă вăрçă вăхăтĕнче Щербаков юлташ ĕççыннисене фронта пулăшма мобилизацилес тата Хĕрлĕ Çарта политикăллă ĕçе организацилес тĕлĕшпе питĕ вăйлă ĕçлерĕ. Щербаков юлташăн организаторла чаплă пултарулăхĕ вăрçă вăхăтĕнчи условисенче вĕçне çитиех анлăн саралса кайрĕ. Партин Мускаври организацине ертсе пырса, Щербаков юлташ столицăри ĕççыннисене хамăр Тăван çĕршыва хÿтĕлеме çĕклерĕ, Мускава хÿтĕлес ĕçе организацилекенсенчен пĕри пулчĕ. ЦК ВКП(б) секретарĕ вырăнĕнче партин ертсе пыракан ĕçне туса тăрса, Щербаков юлташ çав вăхăтрах Хĕрлĕ Çарăн Политикăллă Главнăй Управленийĕн Начальникĕ пулса ĕçлерĕ, хăйĕн пĕтĕм вăйне Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсене политикăллă воспитани парас ĕçе хучĕ. Çав вăхăтрах Щербаков юлташ вăрçă пуçлансанах туса хунă Совет Информаци Бюровĕн Начальникĕ пулса ĕçлерĕ, совет çарĕсем тăвакан вăрçă ĕçĕсем çинчен тĕрĕс пĕлтерсе тăчĕ.

Хуçалăх строительствинче ăнăçлăн ĕçлесе пынăшăн Щербаков юлташа виçĕ хутчен Ленин орденĕпе наградăланă, Верховнăй Главнокомандованин заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн 1-мĕш степень Суворов орденĕпе тата 1-мĕш степень Кутузов орденĕпе наградăланă.

А. С. Щербаков вилни большевиксен партийĕшĕн тата совет халăхĕшĕн питĕ йывăр çухату пулса тăрать. Щербаков юлташ совет халăхĕ фашистла нимĕç захватчикĕсене çĕнтернин результачĕсене кураймарĕ, тăшмана çĕнтерессишĕн вăл хăйĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçленĕччĕ.

Большевиксен партийĕн çав тери паллă деятелĕ, хамăр Тăван çĕршывăн хĕрÿллĕ патриочĕ Александр Сергеевич Щербаков ĕмĕр-ĕмĕр пирĕн чĕрере юлĕ.

Тăпру çăмăл пултăр санăн, хаклă тусăмăр тата шанчăклă юлташăмăр!

И. Сталин, В. Молотов, М. Калинин, К. Ворошилов, Л. Берия, Г. Маленков, А. Микоян, Л. Каганович, Н. Хрущев, А. Жданов, Н. Шверник, Н. Вознесенский, А. Андреев, Н. Булганин, Г. Попов, М. Шкирятов, Г. Жуков, А. Василевский, С. Буденный, А. Антонов, Б. Черноусов, Тарасов, И. Шикин, В. Павлюков, Голиков, А. Поскребышев, В. Пронин, Г. Александров, А. Горкин, Н. Михайлов, Г. Меркулов, Кобулов, С. Круглов, А. Шахурин, А. Максимов, П. Поспелов, Н. Шаталин, Федосеев, М. Шамберг, Е. Андреев, И. Соколов, М. Малахов, М. Журавлев, А. Блинов, Н. Данилов, Н. Фирюбин, Федотов, И. Новиков, Власик, Н. Красавченко, С. Афанасьев, П. Поздеев, П. Артемьев, К. Синилов, В. Романченко.

Пӗр заводри митинг

Ирхине 7 сехет те 30 минутра Челноков юлташ главнӑй инженер пулса ӗçлекен заводри рабочисем, служащисем тата инженерсемпе техниксем, праçникри пек тумланса, стадиона пухӑннӑ. Оркестр калать. Çынсем пӗр-пӗрне аслӑ праçник ячӗпе саламлаççӗ, ыталаççӗ, чуп тӑваççӗ, юрлаççӗ, ташлаççӗ...

8 сехетре трибуна çине ВКП(б) обкомӗн секретарӗ Чарыков юлташ, ЧАССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ Андреева юлташ, ВКП(б) горкомӗн секретарӗ Ислюков юлташ, заводри стахановецсем, парти, комсомол тата профсоюз организацийӗсен представителӗсем хӑпарса тӑраççӗ. Çӗнтерӳ ячӗпе пухнӑ митинга партбюро секретарӗ Полукаров юлташ уçать. Вӑл ВКП(б) Обкомӗн секретарьне, СССР Верховнӑй Совечӗн депутатне И. М. Чарыков юлташа сӑмах парать. Чарыков юлташ митинга пухӑннӑ çынсене аслӑ праçник ячӗпе—тӗрӗслӗх ӗçӗ çӗнтернӗ ятпа саламлать.

— Совет халӑхӗ пулӑшса тӑнӑ Хӗрлӗ Çар хӑй умне аслӑ Сталин лартнӑ задачӑна чыслӑн пурнӑçларӗ,—тет Чарыков юлташ.—Аркатса тӑкнӑ Германин фашистла нимӗç çарӗсем пӗр сӑмахсӑр парӑнасси çинчен калакан акт çине алӑ пуснӑ. Паян эпир хамӑра çак аслӑ çӗнтерӳ патне илсе çитернӗ çынна—Совет Союзӗн Маршалне, хамӑрӑн çулпуçӑмӑра тата учителӗмӗре Сталин юлташа тав тӑватпӑр.

Митингри çынсем Сталин юлташа хисеплесе, тӑвӑллӑн алӑ çупаççӗ, «урра» кӑшкӑраççӗ.

Тӑшман пирӗн çӗре йышӑнса тӑнӑ вӑхӑтра йывӑр кунсемпе çӗрсем пулчӗç. Хамӑр алӑпа тунӑ япаласене аркатмашкӑн тӑшман туртса илнине курсан—чӗре ырататчӗ. Тӑшман Мускав патне çывхарса пыратчӗ.

Анчах халӑх нихӑçан та хӑйӗн вӑйне, Хӗрлӗ Çара тата Верховнӑй Главнокомандующие шанма пӑрахман. Халӑх çӗнӗ вӑйсем пухӑннине, тӑшмана вӗлермеллех çапма хатӗрленнине ӗненсе кӗтсе тӑнӑ. Халӑх Сталин юлташа вӗçӗмсӗр шанса тӑнӑ, Сталин юлташ тӑшман хупӑрласа илнӗ Мускавран çапӑçу ӗçӗсене ертсе пынӑ, нимӗçсене Мускав патӗнче аркатса тӑкас ӗçе организациленӗ.

Халӑх хӑйӗн çулпуçне Сталина, хӑйӗн партине çав тери хытӑ шанса тӑни—нумай çулсем хушши революци çӗнтерӗвӗшӗн пынӑ çапӑçусенче, социализм тӑвассишӗн пынӑ хӗрӳллӗ ӗçре ӳссе çирӗпленсе пынӑ. Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ çав асӑннӑ кунсенче халӑх çапла калатчӗ: Сталин—Мускавра, апла пулсан—тӑшман Мускава пырса кӗреймест.

Эпир хамӑр çӗнтерессине ӗненсе тӑнӑ, мӗншӗн тесен эпир хамӑр ӗç тӗрӗс ӗç иккенне пӗлсе тӑнӑ, хамӑрӑн социализмлӑ государствӑн никам çӗнтереймин хӑватне, хамӑрӑн социализмлӑ индустрипе социализмлӑ ялхуçалӑхӗн хӑватне курса тӑнӑ. Ленин—Сталин партийӗ ертсе пыракан аслӑ совет халӑхӗ мӗнле паттӑр ӗçсем тума пултарнине пӗлсе тӑнӑ. Хӑйӗн Тӑван çӗршывне, аттесемпе асаттесен çӗршывне юратни совет çыннисене çапӑçава кӗрте-кӗрте янӑ, йывӑр кунсенче вӗссене хастарлӑх панӑ. Хамӑр халӑхӑн ашшӗпе учителӗн, аслӑ стратегӑн Сталин юлташӑн генийӗ историре халиччен пулман çак аслӑ вӑрçӑра çӗнтерӳ патне илсе çитерчӗ.

— Пирӗн аслӑ Сталин, эсӗ совет халӑхӗн савӑнӑçӗшӗн, тӑшмана хӑратса тӑмашкӑн нумай çулсем хушши пурӑн!

Халӑхсен çулпуçне хисеплесе, каллех тӑвӑллӑн алӑ çупса яраççӗ.

Унтан заводри стахановка Андриянова юлташ сӑмах илет.

Вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи 4 çул хушшинче эпир асапсем нумай куртӑмӑр, анчах эпир тӑшмана çӗнтермешкӗн нимӗн те шеллесе тӑмарӑмӑр, тӳрӗ кӑмӑлпа тата ывӑнма пӗлмесӗр ӗçлерӗмӗр. Халӗ эпир хамӑр ӗçӗн результатне куратпӑр. Пирӗн ӗç сая каймарӗ. Тӑшмана аркатса тӑкнӑ.

Стахановец-орденоносец Федоров юлташ хӑйӗн фронтри пек ӗçлекен бригади вӑрçӑ вӑхӑтӗнче производство заданийӗсене ытлашшипех тултарса пыни çинчен калать, рабочисене хамӑр Тӑван çӗршывӑн ырлӑхӗшӗн тата вӑйлӑрах ӗçлеме чӗнет.

Митинг, çав тери хавасланса, Сталин юлташ патне ямалли çырӑвӑн текстне йышӑнать. Завод коллективӗ иккӗмӗш кварталти производство планне срокчен—июнӗн 24-мӗшӗ тӗлне, Чӑваш республикин 25 çул тултарнӑ кун тӗлне—тултарма обязательство илчӗ.

Республикӑра çӗнӗ заема бюджетпа пӑхнӑ чухлӗ сарнӑ

Майӑн 11-мӗшӗ тӗлне республикӑра Государствӑн Тӑваттӑмӗш Военнӑй Заемне пурӗ 137.983.000 тенкӗлӗх, е бюджетпа пӑхнин 100,7 проценчӗ чухлӗ сарнӑ. Анчах та колхозниксемпе единоличниксем хушшинче заема бюджетпа палӑртнӑ чухлӗ вырнаçтарса çитермен-ха.

Бюджетпа палӑртнӑ заем сармалли суммӑна республикӑра Шупашкар, Канаш, Çӗмӗрле хулисем тата 23 район ирттерсе тултарнӑ. Советски, Красноармейски, Ишлей, Элӗк, Сӗнтӗр, Чурачӑк, Елчӗк тата Шупашкар районӗсем заема уйрӑмах нумай сарнӑ.

Республикӑра заем укçине пурӗ 37.152.000 тенкӗ пухнӑ. Çакӑ вӑл заема сарнин 26 проценчӗ пулать. Вӑл шутран: колхозниксемпе единоличниксем — 32.082.000 тенкӗ, колхозсем—4.596.000 тенкӗ.

Заем укçи пухас тӗлӗшпе Муркаш районӗ малта пырать. Унта 2.352.000 тенкӗ (е заема сарнин 74,5 проценчӗ) пухнӑ. Ун хыççӑнхи вырӑнсене Куславкка, Вӑрмар, Вӑрнар, Красноармейски районсем йышӑнаççӗ.

Заем укçи пухас тӗлӗшпе уйрӑмах Йӗпреç, Первомайски, Шӑмӑршӑ, Элӗк, Етӗрне, Кувакино, Улатӑр, Пӑрачкав, Комсомольски тата Хӗрлӗ Чутай районӗсем юлса пыраççӗ. Вӗсем, пӗтӗмпе те 100—300-шер пин тенкӗ кӑна е, заема сарнипе танлаштарсан, 4—16 процент таран çеç пухнӑ.

Укçа пухасси—заем кампанийӗн тӗп ӗçӗ. Çавӑнпа заема сарнипех ӗç пӗтнӗ тесе шутлани тӗрӗс мар. Халӗ партипе совет тата профсоюз организацисен, финанс органӗсен заем укçине пухас тӗлӗшпе тимлӗн ӗçлес пулать.

Майӑн 5-мӗшӗ | ***Тӗштырӑсемпе курӑксене акса пӗтермелли вунӑкунлӑх*** | **Майӑн 15-шӗ**

Вӑрнар МТС-ӗ çураки планне тултарнӑ

ВӐРНАР, майӑн 11-мӗшӗ (Телеграфпа) МТС коллективӗ колхоз уйхирӗсенче Хӗрлӗ Çарӑн чаплӑ çӗнтерӗвӗсемпе хавхаланса ӗçлет. Майӑн 10-мӗшӗ тӗлне МТС тракторсемпе ӗçлемелли çураки планне 104 процент тултарчӗ. Уйрӑмӑнах комсомолецсемпе çамрӑксен бригадисем хастарлӑн ӗçлеççӗ. Алексеев юлташ ертсе пыракан 7-мӗш бригада плана 198 процент, Мишаков юлташ ертсе пыракан 2-мӗш бригада 162 процент тата Михӑйлов юлташ ертсе пыракан 14-мӗш бригада 151 процент тултарчӗç.

НИКОНОВ,
МТС директорӗ.

Вӑрнар

МТС директорне Никонова Парторганизаци секретарьне Платонова

МТС коллективне тракторсемпе ӗçлемелли çураки планне срокчен тултарнӑ ятпа саламлатӑп. Çуракине хӑвӑртрах вӗçлес тӗлӗшпе малашне те ӑнӑçлӑн ӗçлеме ырӑ сунатӑп.

Чӑваш АССР Совнаркомӗн Председателӗ
А. МАТВЕЕВ.

Беспаловпа Степанов бригадисем малта

ÇӖРПӲ, майӑн 11-мӗшӗ. (Телеграфпа) Сӗрпӳ МТС-ӗнчи трактористсем çуракине хӑвӑрт тата пысӑк пахалӑхпа ирттерессишӗн тӑрӑшса ӗçлеççӗ. Çӗнтерӳ Кунӗ тӗлне комсомолецсемпе çамрӑксен Степанов юлташ ертсе пыракан бригади тракторсемпе ӗçлемелли çураки планне 101 процент, Беспалов юлташ ертсе пыракан бригада 102 процент тултарчӗç.

АРЗАМАСОВ,
МТС директорӗ.

34 колхоз тӗштырӑ акса пӗтерчӗç

ЧУРАЧӐК, майӑн 11-мӗшӗ. (Телефонпа). Çураки ӗçӗсем районра вӑйлансах пыраççӗ. Паянхи кун тӗлне районри колхозсем çураки планне 74 процент тултарчӗç. 73 колхозран 34 колхоз тӗштырӑсене акса пӗтерчӗç. Уйрӑмӑнах Шуркасси ял Советӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз (председателӗ Ильин юлташ) тата «Майӑн 1-мӗшӗ» колхоз (председателӗ Александров юлташ) лайӑх ӗçлерӗç. Ку колхозсем тӗштырӑсене акса пӗтернӗ.

Малта пыракан колхозсен опычӗ хӑтартса панӑ тӑрӑх, çураки ӑнӑçлӑхне ӗçе организацилеме пӗлни татса парать. Сӑмахран, çулте асӑннӑ Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозра малтанхи кунсенчен пуçласах уйрӑм сдельщинӑпа ӗçлерӗç. Колхозниксене плугпа 1,2—1,4 гектар сухалама задани панӑ. Сухаçӑсем çак нормӑна кашни кунах тултарса е ирттерсе тултарса ӗçленӗ. Акара ӗçлекен колхозниксем хушшинче ӑмӑрту вӑйланса пынӑ. Çапла майпа колхоз 206 гектар çӗре 7 ӗç кунӗнче акса пӗтерчӗ. «Новая сила» колхозра та çураки ӗçӗсем ӑнӑçлӑн пулса пыраççӗ. Кунта тӗштырӑсене сеялкӑпа акнӑ. Акара ӗçлекенсем хушшинче социализмлӑ ӑмӑртӑва лайӑх организациленӗ, агитаци ӗçне лайӑх йӗркеленӗ. Кашни ирех колхозниксене пӗтӗм тӗнчери тата çӗршыври çӗнӗ хыпарсене ӑнлантарса параççӗ. Боевой листоксем кӑларса, çураки ӗçӗсем мӗнле пынине сутатса тӑраççӗ. Кӑтарту хӑми организациленӗ.

Районра юлса пыракан колхозсем те пур. Сӑмахран, «Союз» колхоз мӗншӗн юлса пырать-ха? Кунта уйрӑм сдельщинӑпа ӗçлессине организацилемен. Колхозниксем ӗçе питӗ кая юлса тухаççӗ. Колхоз председателӗ Моисеев юлташ çак çитменлӗхсене пӗтерме тӑрӑшмасть. Çапла вара, колхозӑн çураки ӗçӗсене ӑнӑçлӑн туса пыма пур майсем те пур пулин те, вӑл юлса пырать, паянхи кун тӗлне çураки планне 50 процент кӑна тултарнӑ.

Фронтри пек ӗçлемелли вунӑкунлӑх пуçлансанах эпир районри колхозсемпе ял Совет председателӗсене, парти пуçламӑш организацийӗсен секретарӗсене тата агитколлективсен руководителӗсене пухса канашлу ирттертӗмӗр. Тӗштырӑсене акас тӗлӗшпе кашни колхоза график туса патӑмӑр, çав графика пурнӑçа кӗртнине тӗрӗслесе пыма тытӑнтӑмӑр. Колхозсене ака ӗçӗнче пулӑшма районран уполномоченнӑйсем ятӑмӑр. Çакӑн хыççӑн ӗç чылай вӑйланни сисӗнет. Майӑн 13-мӗшӗ тӗлне ир акмалли тӗштырӑсемпе пӗр çул ӳсекен курӑксене эпир акса пӗтерме шутлатпӑр.

Ф. АРТЕМЬЕВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Ир акмалли тырӑсене акса пӗтернӗ

ШӐХАСАН, майӑн 11-мӗшӗ. (Телефонпа). Районра 14 колхоз суртырӑсене акса пӗтернӗ. Тӑранти «Красный партизан» колхоз (председателӗ Васильев юлташ) тӗштырӑсемпе пӑрса йышши тырӑсене 6 кунта акса пӗтернӗ, майӑн 13-мӗшӗ тӗлне çӗрулми лартса пӗтерет. Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз (председателӗ Дубровин юлташ) суртырӑсене майӑн 4-мӗшӗ тӗлне акса пӗтернӗ. Куйбышев ячӗпе тӑракан, «Новая жизнь», «Гвардеец», Калинин ячӗпе тӑракан, «Трактор» колхозсем те суртырӑсене пысӑк пахалӑхпа акса пӗтернӗ.

Анчах хӑшпӗр колхозсенче çураки ӗçӗсем япӑх пыраççӗ-ха. Ильич ячӗпе тӑракан, «Майӑн 1-мӗшӗ», «Герой», «Красный пахарь» колхозсем çураки планне 45—50 процент çеç пурнӑçланӑ. Агротехника кӑтартӑвӗсене тӗрӗс пурнӑçа кӗртсе пымаççӗ. Сухаланӑ хыççӑн акиччен вӑхӑт нумай иртет.

Иккӗмӗш Хурамалти Ильич ячӗпе тӑракан колхоз çураки планне 46 процент çеç тултарнӑ. Колхоз председателӗ Я. Егоров мӑнкуна 4 кун хушши уявланӑ. Колхозра ӗç дисциплини япӑх. Майӑн 8-мӗшӗнче колхозниксем хире тухман.

Çавӑн пекех Троицки ял Советне кӗрекен «Майӑн 1-мӗшӗ» колхоз та кая юлса пырать. Унта уйрӑм сдельщина йӗркине организацилемен. Колхозниксем ушкӑнпа сухалаççӗ. Ир тухмаççӗ, кас час кӗреççӗ. Çав икӗ колхозра та агитацилӗ-массӑллӑ ӗç япӑх пырать.

«Молодой колхозник» колхозра агротехника правилисене пӑсаççӗ. Кӗрхи çӗртме тунӑ 40 гектар çӗр çине урӑх сухаламасӑрах сӗлӗ акнӑ. Акнӑ хыççӑн сӳреленӗ пулин те, сӗлӗ варӑнса юлман. Колхоз председателӗ П. Сильвестров майӑн 6-мӗшӗпе 10-мӗшӗ хушшинче пӗр кун та урӑ çӳремен, колхоз правленине пырса курман. Çакна ВКП(б) райкомӗпе райисполком пӗлеççӗ, анчах нимӗнле мера та йышӑнмаççӗ. Çав ялта пуçламӗш парторганизаци те пур (секретарӗ Макаров). Анчах агитмассӑллӑ ӗç япӑх. Агротехникӑна пӑснипе Макаров килӗшсе ларать. Колхозра сеялка пур çинчех алӑпа акаççӗ.

В. ВЕСЕЛОВ.

ÇӖРУЛМИ ЛАРТАÇÇӖ

СОВЕТСКОЕ, майӑн 8-мӗшӗ. (Телефонпа). Чемейри «Сеятель» колхоз çуракине планпа пӑхнинчен икӗ кун çурӑ малтан пӗтерчӗ. Сухаланӑ çӗрте уйрӑмах В. Николаева, П. Ефимова, Е. Семенова, Н. Алексеева, П. Смирнова колхозницӑсем лайӑх ӗçленине палӑртмалла. Вӗсем кунсерен 1,30 гектар сухалас вырӑнне 2-шер гектар сухаланӑ. Колхоз тырӑсене пӗтӗмпех сеялкӑпа тата яровизациленӗ акнӑ.

Халӗ колхозниксем хӗрсех çӗрулми лартаççӗ.

Я. СИГАЕВ.

У. Черчилль господин радиопа янӑ послани

Ӗнер, майӑн 9-мӗшӗнче, халӗ Мускавра пурӑнакан Клементина Черчилль госпожа, Англи премьер-министрӗ Уинстон Черчилль хушнӑ тӑрӑх, радиопа çакӑн пек послани вуласа панӑ.

«Премьер-министртан — Сталин Маршала.

Британи нацийӗнчен Хӗрлӗ Çарпа вырӑс халӑхӗ патне янӑ послани.

Эсир, захватчиксене хӑвӑрӑн çӗршывӑртан ӑнӑçлӑ хӑваласа кӑларса тата нацистла тиранне çӗмӗрсе тӑкса, çав тери пысӑк çӗнтерӳ тунӑ ятпа эпӗ Сире пӗтӗм чӗререн салам яратӑп. Британи халӑхӗпе вырӑс халӑхӗн туслӑхӗнчен тата вӗсем пӗр-пӗрне ӑнланнинчен этемлӗхӗн пуласлӑхӗ килнине эпӗ çирӗп шанса тӑратӑп. Кунта, хамӑрӑн утрав çинчи тӑван çӗршывӑмӑрта, эпир паян Сирӗн çинчен час-часах шухӑшлатпӑр, эпир Сире хамӑрӑн чӗререн телейлӗхпе ырӑ пурнӑç сунатпӑр. Эпир Сирӗнпе пӗрле çав пӗтӗм жертвӑсемпе асаплӑха тӳссе салхулӑх улӑхӗ урлӑ каçнӑ хыççӑн, халӗ ӗнтӗ пӗр-пӗринпе туслӑн та кӑмӑллӑн ӗçлесе, çӗнтерӳллӗ мирлӗ саманан хӗвелӗ айӗнче малалла пыма шутлатпӑр.

Эпӗ хамӑн арӑма Сире пурсӑра та çак туслӑхпа хаваслӑх сӑмахӗсене каласа пама ыйтӑп». (ТАСС).

Германи пӗр сӑмахсӑрах парӑнни пирки В. М. Молотов юлташ каланӑ сӑмах

САН-ФРАНЦИСКО, майӑн 9-мӗшӗ. (ТАСС спецкорӗ). Германин хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсем Хӗрлӗ Çарӑн Верховнӑй Главнокомандованине тата союзниксен экспедициллӗ вӑйӗсен командованине парӑнни çинчен çырнӑ акта Мускавра пичетлесе кӑларнӑ май, В. М. Молотов юлташ Пӗрлешнӗ нацисен вилӗмле тӑшманне — гитлерла Германие çӗнтернӗ куна палӑртса, радио тӑрӑх сӑмах тухса каланӑ. В. М. Молотов юлташӑн сӑмахне Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен пур пысӑк радиостанцийӗсем те сарнӑ.

«Паян,—тенӗ В. М. Молотов юлташ,—Мускавра Германи пӗр сӑмахсӑр парӑнни çинчен çырнӑ акта пичетлесе кӑларнӑ. Эпир гитлерла Германие çӗнтернин кунӗ, нумайччен кӗтнӗ кун, çитрӗ. Çак кун эпир хӑйсен паттӑрлӑхӗпе, хӑйсен хӗçпӑшалӗпе пирӗн тӑшмана, Пӗрлешнӗ нацисен вилӗмле тӑшманне çӗнтересси патне илсе пынӑ çынсем çинчен шухӑшлатпӑр. Вилнӗ боецсене тата Германи фашизмӗн шутсӑр нумай жертвисене эпир ӗмӗр-ӗмӗрех асра тытӑпӑр. Эпир вӑрçӑ инвалидӗсем умӗнче, тӑлӑха юлнӑ семьесем умӗнче хамӑрӑн тума тивӗçлӗ аслӑ ӗçсене тӳрӗ кӑмӑлпа туса пырӑпӑр. Германи Совет Союзне вӑрӑ-хурахла тапӑннӑ кун Совет правительстви çапла пӗлтернӗччӗ: «Пирӗн ӗç—тӗрӗс ӗç. Тӑшмана аркатса тӑкӑпӑр. Çӗнтерӳ пирӗнте пулӗ»,—тенӗччӗ. Тӑшмана эпир вӑрӑм та йывӑр кӗрешӳре çӗнтертӗмӗр. Совет халӑхӗ, захватчиксене хӑйӗн Тӑван çӗршывӗнчен хӑваласа кӑларас тесе, пире вилӗмсӗр Ленин вӗрентнӗ пек, хамӑрӑн ирӗклӗхпе никама пӑхӑнмалӑха сыхласа хӑварас тесе, мӗнпур вӑйне пухса кӗрешрӗ. Эпир хамӑрӑн демократиллӗ союзниксемпе пӗрле Европӑра ирӗклӗх вӑрçине çӗнтерӳллӗн вӗçлерӗмӗр. Германи фашизмне çӗнтерни историре çав тери пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Аслӑ Сталин ертсе пынипе эпир чаплӑ çӗнтертӗмӗр те халӗ ӗнтӗ çирӗп мир тӑвассишӗн малалла каятпӑр. Пирӗн хамӑрӑн çӗнтерӗвӗ халӑхсен ирӗклӗхӗшӗн, этемлӗхӗн ырлӑхӗшӗн, культурлӑхӗпе прогресӗшӗн çирӗплетсе хӑвармалла».

Лондон çӗнтерӗве уявлать

ЛОНДОН, майӑн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчӗ пӗлтернӗ тӑрӑх, Çӗнтерӳ праçникӗ кунӗнче каçхине Лондонӑн тулашӗнчи районӗсем вуçех пушанса юлнӑ. Лондонри хаваслӑ темиçе миллион çын хулан хӗвеланӑçӗнчи пайне тата правительство çурчӗсем ларакан урамсене васканӑ. Тӗп площадьсемпе урамсенче çынсем пухӑна-пухӑна тӑнӑ.

Çутатакан ракетӑсем, вӗçе-вӗçе хӑпарса, Букингем дворецӗ патне пухӑннӑ халӑха çутатнӑ. Лондон варринчи кашни пушӑ вырӑна халӑх пырса тулнӑ.

Çӗрле пулсан, хулан нумай районӗсене прожекторсем çутатса тӑнӑ. Лондонӑн хӗвелтухӑç пайӗнчи çӳллӗрех вырӑнта ларакан Павел святой чиркӗвӗ кӑвак тата ылттӑн тӗслӗ вутсемпе ялтӑртатса тӑнӑ. Букингем дворецӗнчен Англи королӗ радиопа сӑмах каланӑ. Премьер-министр Черчилль сывлӑх министерстви çурчӗн балконӗ çинчен кӗске сӑмах каланӑ.

ГЕРМАНИ ПАРӐННИ ПИРКИ РИМРА ПУЛСА ИРТНӖ ДЕМОНСТРАЦИ

РИМ, майӑн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Германи парӑннӑ май кунта демонстрацисем пулса иртнӗ, демонстрацие коммунистсен, социалистсен, христианла демократсен тата республиканецсен партийӗсен 30.000 членӗ хутшӑннӑ. Демонстрантсем «Сывӑ пултӑр Хӗрлӗ Çар!», «Сывӑ пултӑр Росси!», «Сывӑ пултӑр Сталин!» тесе çырнӑ плакатсем йӑтса пынӑ. Демонстрантсен колонни СССР Посольствин çурчӗ патне пынӑ. Çиче çынтан тӑракан делегацие, Римри ӗç палатин представителӗ Массини ертсе пынӑскере, СССР Посолӗ Костылев йышӑннӑ. Делегатсем ӑна вӑрçӑ чарӑннӑ май Рим халӑхӗ ячӗпе саламланӑ. Совет Посолӗ демонстрантсене Посольство çурчӗн балконӗ çинчен саламлӑ сӑмах каланӑ.

Унтан демонстрантсем Англи Посольствин çурчӗ патне кайнӑ. Ноэль Чарлз Посол вӗсене хӑйне саламланӑшӑн тав тунӑ.

Ун хыççӑн демонстрантсем Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Посольствин çурчӗ патӗнче, Франци Посольствин çурчӗ патӗнче пухӑннӑ. Кунта вӗсене Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Посолӗ Керк тата Франци Посолӗ Куф де Мюрвилль саламланӑ.

БЕЛГРАД ÇӖНТЕРӲ КУННЕ УЯВЛАТЬ

БЕЛГРАД, майӑн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Майӑн 9-мӗшӗнче ирхине Белград уяв чухнехи пек пулса тӑнӑ. Çуртсене Югославин, Совет Союзӗн, Англин тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен ялавӗсемпе илемлетнӗ. Çуртсен стенисем çинче, витринӑсем çинче—Югослави халӑхне ирӗке кӑларасшӑн пынӑ кӗрешӗве ертсе пыракансен сӑнӗсем, Сталин Маршалӑн, Черчиллӗн, Рузвельтӑн тата Трумэнӑн сӑнӗсем. Урамсене уяв чухнехи пек тумланнӑ çынсем тухса тулнӑ.

10 сехетре ирхине радио тӑрӑх Югослави халӑхне саламласа Тито Маршал сӑмах каланӑ. Вӑл четниксене, усташасене тата хирӗç тӑрса çапӑçакансене ыттисене те хӗçпӑшалӗсене пӑрахса парӑнма сӗннӗ. Маршалӑн сӑмахӗ хыççӑн Белградри радио Югославин наци гимнне тата Совет Союзӗн, Англин, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен, Францин государство гимнӗсене выляса панӑ.

ВӐХӐТЛӐХ ПРАВИТЕЛЬСТВО АВСТРИ ХАЛӐХНЕ ЧӖНСЕ КАЛАНИ

ВЕНА, майӑн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Австри республикин Вӑхӑтлӑх правительстви, Германи парӑннӑ май, пӗтӗм Австри халӑхне чӗнсе каланӑ. Чӗнсе каланинче çапла каланӑ: «Австри халӑхӗ вӑрçӑ чарӑннине ырлать, мирлӗ самана пуçланнине саламлать тата союзлӑ державӑсене мирлӗ самана тӑвассине хӑвӑртлатнӑшӑн, çапла вара Австрие нимӗç чуралӑхӗнчен ирӗке кӑларнӑшӑн тав тӑвать».

Норвегири лару-тӑру

СТОКГОЛЬМ, майӑн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Осло хулинче Норвеги администрацийӗ ӗçлеме тытӑннӑ.

Норвегири шалти фронт отрячӗсем çӗршывра хуçа пулса тӑраççӗ.

КВИСЛИНГА ТАТА УН МАЙЛИСЕНЕ ТЫТСА ХУПНӐ

ЛОНДОН, майӑн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Квислинг хӑйӗн «правительствин» хӑшпӗр членӗсемпе пӗрле Осло хулинчи полици участокне пынӑ. Вӗсене пурне те, вӑл шутра пропаганда министрӗ пулнӑ Фуглесанга, çавӑнтах арестленӗ.

Лондонра илнӗ хыпарсем тӑрӑх, Ослора 400 квислинговеца тытса хупнӑ, вӗсен шутне квислинговецсен верховнӑй сучӗн членӗсем те кӗреççӗ.

ТЕРБОВЕН ВИЛНӖ

ЛОНДОН, майӑн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Норвегири телеграф агентстви Осло хулинчен çапла пӗлтернӗ: Гитлерӑн Норвегири правительство комиссарӗ Иозеф Тербовен тата Норвегири гестапо начальникӗ Вильгельм Редиес генерал перӗнсе вилнӗ.

ЛӐПКӐ ОКЕАН ÇИНЧИ ВӐРÇӐ

ЛОНДОН, майӑн 10-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви каланӑ тӑрӑх, союзниксен Лӑпкӑ океанӑн кӑнтӑр-хӗвеланӑç пайӗнчи хӗçпӑшаллӑ вӑйӗсен пӗрлешӳллӗ командованийӗн штабӗ çапла пӗлтернӗ: Америка çарӗсем Минданао утравӗ патӗнчи Давас заливӗ урлӑ каçнӑ та Саман утравӗ çине аннӑ. Америка çарӗсем Лусон утравӗн вӑтаçӗрти пайӗнче малалла куçса пынӑ, çав утравӑн çурçӗр пайӗнчи Япони çарӗсен юлашкийӗсене пӗтерсе пынӑ. Паракан утравӗ çинче Австрали çарӗсем çаплах малалла куçса пынӑ.

ВАШИНГТОН, майӑн 10-мӗшӗ. (ТАСС). США-н çар министерстви çапла пӗлтернӗ: майӑн 10-мӗшӗнче американецсен «Вӗçекен крепость» йышши хӑватлӑрах та хӑватлӑ 400 бомбардировщикӗ Японири Хонсю утравӗн кӑнтӑр пайӗнчи промышленность объекчӗсемпе вӑрçӑ объекчӗсене тапаннӑ, çавӑн пекех тата Японири Кюсю утравӗ çинчи авиаци сооруженийӗсем çине бомбӑсем пӑрахнӑ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

„1941—1945 çулсенчи Отечественнӑй Аслӑ вӑрçӑра Германие çӗнтернӗшӗн“ ятлӑ медаль тӑвасси çинчен

1. Германие çӗнтернине ӗмӗрлӗхе палӑртса хӑварас тесе, «1941—1945 çулсенчи Отечественнӑй Аслӑ вӑрçӑра Германие çӗнтернӗшӗн» ятлӑ медаль тӑвас.

2. «1941—1945 çулсенчи Отечественнӑй Аслӑ вӑрçӑра Германие çӗнтернӗшӗн» медалӗн Положенине çирӗплетес.

3. «1941—1945 çулсенчи Отечественнӑй Аслӑ вӑрçӑра Германие çӗнтернӗшӗн» медаль мӗнле пулмалли çинчен çырса кӑтартнине çирӗплетес.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи майӑн 9-мӗшӗ.

„1941—1945 çулсенчи Отечественнӑй Аслӑ вӑрçӑра Германие çӗнтернӗшӗн“ ятлӑ медаль мӗнле пулмалли çинчен çырса кӑтартни

Медале йӑсран çавракка формӑллӑ тӑваççӗ. Медалӗн пичӗ енче—Совет Союзӗн Маршалӗн тумне тӑхӑннӑ И. В. Сталин юлташӑн сӑнне ӳкернӗ. Медалӗн çӳлти пайӗнче çавракка тӑрӑх çапла çырнӑ: «Пирӗн ӗç—тӗрӗс ӗç». «Эпир çӗнтертӗмӗр».

Медалӗн тӳнтер енӗ çакӑн пек: çавракка тӑрӑх—«Германие çӗнтернӗшӗн», варринче—«1941—1945 çулсенчи Отечественнӑй аслӑ вӑрçӑра» тенӗ сӑмахсем аялти пайӗнче—пилӗк кӗтеслӗ çӑлтӑр.

Медаль çинчи ӳкерчӗксем тата çырнисен саспаллийӗсем мӑкӑрӑлчӑк пулаççӗ, медаль пысӑкӑшӗ—диаметрпа шутласан, 32 миллиметр пулать.

Медаль ункӑ урлӑ пилӗк кӗтеслӗ колодкӑпа пӗрлешсе тӑрать. Тимӗрне 24 миллиметр сарлакӑш пурçӑн муаровӑй хӑюпа сӑрнӑ. Хӑю çинче пӗр пек тӑрӑхла йӗрсем пиллӗк пулаççӗ—висӗ йӗре хура, хӑю йӗри-тавра сарӑрах тӗслӗ ансӑр йӗрсем пулаççӗ.

„1941—1945 çулсенчи Отечественнӑй Аслӑ вӑрçӑра Германие çӗнтернӗшӗн“ ятлӑ медалӗн

ПОЛОЖЕНИЙӖ

1. «1941—1945 çулсенчи Отечественнӑй Аслӑ вӑрçӑра Германие çӗнтернӗшӗн» ятлӑ медале çаксене параççӗ:

а) Хӗрлӗ Çарта, Тинӗс-Çар Флотӗнче тата НКВД çарӗсенче тӑрса Отечественнӑй вӑрçӑ фрончӗсенче пулнӑ е çар округӗсенче ӗçлесе çӗнтерӳ тума пулӑшнӑ мӗнпур çар çыннисене тата штатри тара кӗрӗшсе ӗçлекен çынсене;

б) Отечественнӑй вӑрçӑ вӑхӑтӗнче çапӑçури Хӗрлӗ Çарта, Тинӗс-Çар Флотӗнче тата НКВД çарӗсенче пулнӑ мӗнпур çар çыннисене тата штатри тара кӗрӗшсе ӗçлекен çынсене, анчах та çартан аманнӑ, суранланнӑ е чирленӗ пирки кайнӑскерсене, çавӑн пекех государство тата парти органӗсем йышӑннӑ тӑрӑх çар тулашӗнчи урӑх ӗçе куçарнӑ çынсене.

2. «1941—1945 çулсенчи Отечественнӑй Аслӑ вӑрçӑра Германие çӗнтернӗшӗн» ятлӑ медале СССР Верховнӑй Совет Президиумӗ ячӗпе чӑссен командирӗсем, çарти сыватмалли учрежденисен начальникӗсем тата ӗççынни депутачӗсен Совечӗсен область исполкомӗсем панӑ документсем тӑрӑх параççӗ.

Медале çаксем параççӗ: Хӗрлӗ Çарӑн, Тинӗс-Çар Флочӗн тата НКВД çарӗсен чӑсӗсенче тӑракан çынсене—çар чӑсӗсен командирӗсем, çартан кайнӑ çынсене — медаль илме тивӗçлӗ çын пурӑнакан хулари тата районри çар комиссарӗсем.

3. «1941—1945 çулсенчи Отечественнӑй Аслӑ вӑрçӑра Германие çӗнтернӗшӗн» ятлӑ медале кӑкӑр çине сулахай енне çакса çӳремелле. Урӑх орденсемпе медальсем те пулсан, ку медале «Совет Заполярьине хӳтӗленӗшӗн» ятлӑ медаль хыççӑн çакмалла.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторӑн — 0—67, заместителӗн — 2—89, секретарӗн — 4—28, парти пурнӑç пайӗн 3—97, промышленность пайӗн — 3—99, ялхуçалӑх пайӗн — 3—99, издательство конторин — 0—23.

НТ 00340 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 10.500